Чăваш Республикин Вăрмар районĕнчи шкул çулне çитмен ачасене вĕрентекен муниципаллă бюджетлă вĕрентӳ учрежденийĕ «Пĕрремĕш номерлĕ «Березка» ача сачĕ»

# «Асанне патĕнче хăнара»

Мероприятие хатĕрлесе ирттерекенсем,
Иванова Марина Витальевна
Мясникова Надежда Константиновна

Вăрмар 2018

**Асанне патӗнче хӑнара**

**Тӗллевсем:**

1. Ачасене чӑваш халӑх тумӗн илемне курма, юратма вӗрентесси;

2.Чӑваш халӑхӗн юрри-ташшин илемлӗхне, авалхи вӑййисен асамлӑхне тата пӗлтерӗшне туйма хӑнӑхтарасси;

3. Пӗрлехи ӗҫсем ирттерсе калаҫу чӗлхине, юрлас-ташлас ӑсталӑха аталантарасси.

**Мероприяти йӗрки :**

**Асанне:** Кӑштах кил-ҫуртра майлам-ха. Часах ачасем те килеҫҫӗ пуль. Юрать ҫав шӑпӑрлансем килсе чуна йӑпатаҫҫӗ. Чӑннипех те тӗлӗнмелле пултаруллӑ ачасем вӗсем манӑн. Ав,сассисем илтӗнме те пуҫларӗҫ .

*/Ачасем зала алла-аллӑн тытӑнса «Ҫӗмӗрт ҫӗҫки ҫурӑлсан» чӑваш халӑх юррине юрласа кӗреҫҫӗ. Икӗ картана тӑрса юрлаҫҫӗ. Вӗсем хӑнасене сывлӑх сунаҫҫӗ, пуҫ таяҫҫӗ./*

**Ертсе пыракан:** Ырӑ кун пултӑр, сывӑ-и, асанне!

**Ачасем:** Пирӗн килес, килме юрать-и?

**Асанне:** Килӗрех, килӗр, маларах иртӗр.

**Ачасем:** Ырӑ кун пултӑр, асанне. Сирӗн сывлӑхӑр мӗнле?

**Асанне:** Ырӑ кун пултӑр, ачасем. Ҫӳретӗп-ха кӑштӑртатса, вӑй-халӑм ҫитнӗ чух. Иртӗр, ларӑр тӗпелелле. Ӑҫта Анюкпа Ванюк курӑнмаҫҫӗ?

**Ачасем:**

- Ҫывӑрса юлчӗҫ пуль.

- Кунта килессине пӗлеҫҫӗ-ха вӗсем.

- Акӑ, килчӗҫ, килчӗҫ!

**Анюк:** Сывлӑх сунатпӑр, асанне. Салам, туссем!

**Ванюк**: Ырӑ кун пултӑр, хаклӑ хӑнасем!

**Асанне:** Пӑхатӑп та сирӗн ҫине – мӗнле хитре, капӑр чӑваш тумӗсемпе эсир! Пӑхса ытармалла мар сирӗн ҫине.

**Ванюк:** Паянхи уява хатӗрлентӗмӗр эпир. Чӑваш тумӗсемпе килес терӗмӗр.

**Асанне:** Чӑваш ҫынни кун пек ҫи-пуҫпа уявсенче пуҫтарӑннӑ. Мӗнле илемлӗ чӑваш тӗррилле тумтир! Чӑваш кӗпине шурӑ пиртен ҫӗленӗ. Шурӑ тӗс вӑл тасалӑха, пуласлӑха пӗлтерет. Ытти халӑх тӗррисенчен уйрӑлса тӑрать чӑваш тӗрри. Кӗпе ҫинчи тӗрӗсем вара усалтан та сыхлаҫҫӗ тенӗ. Чӑваш ҫынни мӗн ӗлӗкренех ӗҫчен, ҫирӗп кӑмӑллӑ пулнӑ. Ачасем кӗпе ҫинче ытларах мӗнле тӗссем куратӑр?

**Ачасем:** Хӗрлӗ, сарӑ, симӗс тӗссем.

**Асанне:** Ҫапла, тӗрӗс ачасем! Хӗрлӗ тӗс усалсене хӑваласа ярать тенӗ, пурнӑҫ тенине пӗлтерет. Хура тӗс ҫӗр тӗсне – халӑх вӑйне пӗлтерет. Сарӑ – хӗвел, савӑнӑҫ, телей, ҫамрӑклӑх; Симӗс – ҫут ҫанталӑк тӗсӗ. Ку вара – масмак. Хӗрсен пуҫа тӑхӑнмалли ҫи-пуҫӗ. Ӑна тӗрӗсемпе, вӗтӗ шӑрҫасемпе илемлетнӗ. Пирӗн, ачасен, хамӑрӑн асаттесемпе асаннесен чӗлхине, мӗнле пурӑннине – историне, вӗсен тумне, юрри–ташшисене,

ваййисене манмалла мар. Аваллăхсăр малашлăх çук, тенĕ ваттисем. Чăвашăн ырă ятне яланах çӳллĕ шайра тытса пырар.

*(Анюк сăвă калать* **«Çĕр пин юрă Çĕршывĕ»)**

Сĕм вăрман, ылтăн хир, Атăл шыве…
Тĕрлĕ халăх кунта пурăнать.
Чăваш çĕре – юратнă Çĕршывăм
Çулсĕрен çĕнелсе улшăнать.

Ман Çĕршыв – çĕр пин юрă Çĕршывĕ,
Калаçать вăл çĕр пин сăмахпа.
Ун çĕр пин тĕррине эс куç хывăн
Чи илемлĕ таса туйăмпа.

Ман Çĕршыв – чăн сăмах Çĕршывĕ,
Иксĕлми вăй-хăватлăн сывлать.
Вăл ӳстернĕ çунатлă хĕр-ывăл
Çăлтăрсем патнелле çул хывать.

Ман Çĕршыв – тус-тăванлăх Çĕршывĕ,
Чапĕ ун хĕвел пек ялтăрать.
Улăп ĕвĕр эпир паттăр, сывă,
Ырă ĕмĕт мала йыхăрать.
/Ю. Петров/

**Асанне:** Ну, маттур та вара эсĕ Анюк . Пирĕн хамăрăн тăван чĕлхене хисеплемелле, юратмалла.

**Ертсе пыракан:** Паян эпир сирĕнпе чăваш халăхĕн пултарулăхне тепĕр хут аса илсе мĕн пĕлнине çирĕплетсе хăварар - ха.
"Ireклĕ Çĕр-шыв ытăмĕнче,
Çутă хумлă Атăл хĕрринче

Ĕçлĕ халăх,Чăваш халăх пурăнать",-тесе çырнă П. Афанасьев. Чăваш халăхĕ хăйĕн уявĕсемпе паллă. Мĕнле илемлĕ чăваш çи-пуçĕ, тĕрри. Чăваш халăхĕ мĕн авалтан ĕçчен халăх пулнă. Вăл  уй-хирте те ĕçленĕ, ал ĕçне те тунă, юрра-ташша та пултарнă.
Чăваш хĕрĕсемпе каччисем кунĕпе ĕçлесе ывăннă хыççăн каçсерен ваййа тухнă. Вăйăра час-часах ывăнни çинчен мансах кайнă.
-Ачасем, эпир те  асаттесемпе асаннесем çамрăк чух ваййа тухнă пек вăйă иртерер, ташлар, выльар, савăнар.

**Асанне:** Атьăр-ха хамăрăн вăйă йĕркине уçса пырса тĕлĕнтерер-ха !

**Ачасем:** Выляс, тĕлĕнтерес !

**1 - мĕш ача:** Атьăр вăйă пуçлар-и, пуçлар-и.

Карталанса тăрар-и, тăрар-и?

Вăйă пăхан çынсене,

Савăнтарса выляр-и?

**2- мĕш ача:** Атьăр ваййа пуçлар-и те

Вăй кĕввине калар-и

Вăйă кĕвви пĕр сумлăх та,

Пирĕн вăйă çĕр сумлăх.

**Асанне:.** Мĕнле вăйă выляр-ши, ачасем?

**Ачасем:** Япала пуçтармалла!

**Асанне** Япала пуçтараканĕсем камсем пулĕç?

**Ачасем:** Катьăпа Дима!

**Ертсе пыракан:** Ачасем,эсир хатĕр-и? Вăййа пуçлар-ха эппин, шăпа ямалли сăвва калар.

*(Ачасем алăран тытăнса çавра картана тăраççĕ.Япала пухакансем пĕри – карта ăшĕнче,тепри – тулăшĕнче. Вĕсем алăран алла тытăннă. Карта тавра юрласа çаврăнаççĕ. Кам тĕлĕнче юрă пĕтет, чарăнса çавăнтан япала илеççĕ.)*

Шит-шит,

Шитте-путте яппутте.

Сараппан арки кĕмĕл,

Кĕмĕл çĕрĕ çавракa.

Тавай мана япала!

*(Япаласене пухса çитерсен япала хуçисене ĕç хушаççĕ.)*

**Асанне:** Романа мĕн тутаратпăр?

**Пĕр ачи:** Юрлаттарас!

**1-мĕш хĕр ача:** Роман, тухсам, санăн юрлас пулать.

**Роман:** Эпĕ юрлаятăп-ши? Юрласа пăхам. (*«Çулçăсемпе ташă » юрра юрлать)*

Хĕрлĕ, сарă çулçăсем
Пахчара вĕçеççĕ.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнса
Çĕр çине ўкеççĕ.
П-в: Атьăр, атьăр ачасем
Савăнса ташлар-ха.
Çулçăсем пек вĕлтĕр-вĕлтĕр
Хуллен çаврăнар- ха.

**Асанне:** Çак тутăр хуçине мĕн тутаратпăр?

**Ачасем:** Автанла кăшкăрттарас!

**Асанне***:* Çак япала хуçине мĕн тутаратпăр?

**Ачасем:** Юрларамăр, тепре ташлаттарас!

*(Ванюк ташлать. «Тух-ха, Ванюк»)*

**3- мĕш ача:** Манăн та ташлас килсе кайрĕ. Айтăр, хĕрсем, юрлар-и? Каччăсемпе ташлар-и?

*( «Сарă каччă» юрă юрлаççĕ.)*

**Ертсе пыракан**: Пирĕн чăваш халăхĕ сĕре пултаруллă, ăста тупмалли юмахсем калама, юптарусем юптарма. Эсир пĕлетĕр-и вĕсене? Тупсăмĕсене тупма пултартăр-и? Апла пулсан, итлер:

-Çĕр çинче мĕн çемçе? (ал тупанĕ)
-Çĕр çинче мĕн çивĕч? (çивĕч сăмах)
- Çĕр çинче мĕн тутлă? (ыйхă)
-Çĕр çинче мĕн вăйлă? (çын)

-Авалхи чăвашсем кĕрхи вăхăта питĕ хакланă. Кĕр пуçтарать, хĕл салатать, тенĕ вĕсем. Кĕрхи кунсенче хĕл каçмалăх апат-çимĕç, утă-улăм тата хуçалăхра кирлĕ япаласене пухма тăрăшнă. Кĕрхи апат-çимĕç çинчен тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупса пама пултаратăр-и эсир, ачасем?
-Тĕп сакайне çĕрçисем кĕрр! вĕçсе кĕчĕç. (Çĕр улми)
-Хăй çавракан – уйăх мар, хĕреллĕ–лаша мар, çап-çара та - сар çу мар, çулçи симĕс – вăрман мар. Мĕн-ши ку? (Çарăк)
- Сарă Сарпикен сакăр вунă сараппан. (Сухан)
-Çитмĕл хут тăхăннă, пĕрне те çелемен. (Купăста)

**Асанне***:* Маттур ачасем !Тепĕр вăйă выляр-ха.

**Ачасем:** Атьăр «Кулăшла вăййăсем » выляр.

**Асанне:** Чăваш халăхĕ сĕре сăнавлаă халăх пулнă, ĕлĕкренех çут-çанталăка сăнаса унăн йĕркине хăйне кирлĕ май çавăрса ĕçлеме тăрăшнаă, юлхав та наян çынсенчен кулма, вĕсене вĕрентме тăраăшнă.
*/Ачасем пĕчĕкçĕ сценкăсем выляççĕ/*

**Пĕр ача**:-Ачасем, пăхăр-ха, эп мĕн тупрăм?
-Уяр, уяр, уяр пулсан – çÿлелле кай,
Çумăр пулсан – аялалла кай.

**Ачасем**: Çÿлелле кайрĕ! çÿлелле! Уяр пулать!

**Тепĕр ача**: -Ав,ав, тăри вĕçет.

**Ачасем**: -Ăçта? Ăçта?
-Ав, хĕвелпе çумăн.
Тăр-тăри, тăр-тăри,
Тăри килне куртăр-и?
Пăри пăтти çакрăр-и?
Мана çиме чĕнтĕр-и?

*/Çĕр çине выртса йăваланать./*

-Мĕн тăватăн эсĕ?
-Тăри курсан, çĕр çинче выртса йăваланмалла, теççĕ, ваттисем. Вара çын чирлемест, тет.
-Апла эпир те выртса йăваланар.

*/Виççĕше те выртса йăваланаççĕ/*
*/Пĕчĕкçĕ ачасем лашалла выляса чупса кĕреççĕ.Пĕр ачи пĕчĕкреххине чарса ыйтать*:/

-Пасара кайса-и?-Кайса.
-Купăс илсе-и?-Илсе.
-Калама юрать –и? -Юрать!

/ *Пысăкки пĕчĕккине кăтăклать. Пĕчĕкрехххи кула-кула тухса каять.*
*Иккĕн сцена çине тухса тăраççĕ. Пĕри теприне:/*

-Итле-ха. Эсĕ ман хыççăн «эп те» тесе пыраятăн-и?-Пыраятăп.
-Эп пасара кайрăм.-Эп те.
-Эп кулачă илтĕм.-Эп те.
-Эп кулач ачасене çитертĕм.-Эп те.
Эп хура пыльчăк çирĕм.-Эп те.

**Асанне** : Маттур , ачасем , эсир мана сĕре килĕшрĕр !

**Ертсе пыракан**: Халь сире, хăнасене, пирĕн ăста ачасем юптарусемпе паллаштараççĕ. Тимлесе итлĕр, хăвăра вĕсем хушшинче палласа илмĕр-и?

**«Вĕçевçĕсем» (юптару)**
Кăркка хăпартланать,
Лупас урлах вĕçмешкĕн хăтланать:
-Халех,- тет вăл,-халех!...
Анчах хăпартланни ун ахалех.
-Санран пулать-и! – тет автан.-
Çатан çине те эс ларса курман.
Манран вĕрен: тем çӳллĕш каштана
Вĕçсе çитетĕп вăшт! кăна.
-Мухтанчăксем! –тесе вĕлт çеç
Çӳлтен вĕçсе иртет Чĕкеç. /А.Калкан/

**«Чăрсăр автансем»(юптару**)
Пĕр ирхине ик сар автан пĕр харăс курнă тулă пĕрчине.
-Эп куртăм чи малтан!- пуçланă янрашма пĕри.
-Çук, эпĕ! – тенĕ тапăнса тепри,- кĕçтет-им сан пуçу?!
Пуçланнă акăш-макăш çапăçу.
Ăна çерçи илтсе кĕç пынă та сиксе
Тул пĕрчине кап! хыпнă та вĕçтернĕ йăвине.
Сисмен çакна «мăнаçлă» автансем;
Çĕрçи сăмси пек тулăшăн вĕсем
Юнпа пĕветне пĕр-пĕрне.
Туссем! Ун пек ан пулăр ĕмĕрне!

*(Юптару вĕçленсен Максим сăвă калать).*

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,
Шăпчăк та юрлать кунта халь чăвашла.
Сассăм пин чĕлхеллĕ халăх хушшинче
Янăрать хавассăн, уççăн, чăвашла.(Любовь Мартьянова)

**Асанне:** Маттур, Максим. Маттур, ачасем!

**3- мĕш ача:** Чăваш тĕнчи – чунра вăл,
Чăваш тĕнчи – юрăра.
Чăваш тĕнчи – ташăра вăл,
Чăваш тĕнчи – чăн калаçура.

**4- мĕш ача:** Ташла, чăваш, ташла,
Чун каниччен ташла.

Юрла, чăваш, юрла,
Телей юрри эс юрла.

**Ертсе пыракан:** Çывхарать вĕçне пирĕн пĕчекçĕ уяв. Юрă-кĕвĕпе пурăнакан çын вăл пуян чун-чĕреллĕ, уçă кăмăллă, ырă шухăшлă, илемлĕ çын. Уншăн юрă та ырă çимĕç, сиплĕ эмел пекех. Сăпка сиктерет-и, вăййа тухать-и, ĕçре вăй хурать-и – хай емерне юрăпа, вайăпа, шӳтпе ирттернĕ чăваш çынни.

-Ырă йаласем пуррине
Асра тытса пурнар-и?
Атте-аннен сăввисене
Чунтан савса калар-и?
- Ачасене сăмах паратăп.

**5 - мĕш ача:**Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн,
Тăпăл-тăпăл тăпалкка ташшишĕн,
Асамат кĕперĕ пек тĕрришĕн,
Атăл шывĕ пек çемçе чĕлхишĕн.
Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн.

**6 - мĕш ача:** Вырăсла пĕлнишĕн вĕççĕр савăнатăп,
Ик чĕлхе пĕлнишĕн питĕ мухтанатăп.
Вырăсла калаçăп эпĕ вырăслах,
Чăвашлах пуплесчĕ манăн чăвашлах.
*(А. Николаева)*

**Ертсе пыракан :** Атте-анне чĕлхине, асанне асаттесен йăлисене манас марччĕ. Чăн-чăн чăваш чунлă чăваш ачисем эсир. Сирĕн пек ачасем пур чухне малашлăх та пур пирĕн.

**Асанне** : Эпир сирĕнпе, ачасем, ваттисем – пурте Чăваш Республикинче пурăнатпăр. Пирĕн туслă, килĕштерсе, пĕр-пĕрин культурине хисеплесе паллă уявсене: çăварние, Мăнкуна… ирттермелле. Мĕншен тесен туслăха çитесси пурăнан пурнăçра нимĕн те çитмест. Ĕмĕрне çапла пултăр!
Тавтапуç сире - ачасем ! Сывă пулăр, ан чирлĕр, пĕр- пĕрinпе туслă пурăнăр!

**Ачасем:** Тавтапуç асанне ,сывă пулăр!